28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
14
ВЫРСАРНИКУН
200 (6951) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

ВĂРЛĂХ ХЫВАССИ—ЧИ КИРЛĔ ĔÇСЕНЧЕН ПĔРИ

Паха вăрлăх, тухăçлă тырпулăн никĕсĕ пулса тăни пуриншĕн те паллă. «Мĕн акатăн, çавна пухса илетĕн», тенĕ ваттисем. Республикăри нумай колхозсем халĕ тырпул пухса кĕртес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Авăн çапса пĕтернĕ колхозсен шучĕ кулленех ÿссе пырать.

Килес çулхи тухăçлă тырпулшăн кĕрешес вăхăт çитрĕ. Вăрлăх—колхозăн ылттăн фончĕ пулса тăрать. Вăрлăх çителĕклĕ уйăрнă хыççăн тата государство умĕнчи обязательствăна парса татнă хыççăн кăна ытти фондсене тума юрать.

Партипе правительство вăрлăх хуçалăхне йĕркелесе ярассине тата вăрлăха пăхса усрассине яланах пысăк вырăн йышăнакан ĕç тесе шутланă. СССР Совнаркомĕ «Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленире 1945 тата 1946 çулсем хушшинче сортлă та лайăх вăрлăхсем акса тăвас ĕçе вăрçăченхи виçене çитерме хушрĕ.

Вăрлăх фончĕсене çителĕклĕ таран уйăрасси ответлă тата паха ĕç пулса тăрать. Вăрлăх хывасси—паянхи ĕç, ăна вăраха тăсса пыма юрамасть. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кашни колхозрах асра тытмалла. Иртнĕ çул вăрлăх хывас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеменнине пула, кăçал çуркунне пысăк йывăрлăхсем пулчĕç. Чылай колхозсем çураки ĕçĕ хĕрÿллĕ пынă вăхăтра вăрлăх шыраса вăхăта иртерчĕç, çавна пула çуракине тăсса пычĕç тата пусуçаврăнăшне кирлĕ пек йĕркелесе яраймарĕç.

Кăçал çĕрĕç органĕсемпе колхозсем вăрлăх хуçалăхне йĕркелес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç. Кашни колхозрах вăрлăх участокĕсем уйăрса, вĕсене пăхса çитĕнтерме тата пухса кĕртме ятарласа звеносем организацилерĕç. Колхозниксем тăрăшса ĕçленине пула, вăрлăх участокĕсенче тухăçлă тырпул çитĕнчĕ. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырă ытти участоксенчинчен 20—30 процент тухăçлăрах пулчĕ. Анчах вăрлăхлăх тырра вăхăтра çапса пуçтармасан тата ăна лайăх пăхса усрамасан, колхозниксен çу хута ĕçленĕ ĕçĕ ахалех пулма пултарать.

Вăрлăха лайăх пăхса усракан колхозсене тĕмĕн чухлех тупса кăтартма пулать. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх участокĕсенчен вăтам шутпа кашни гектартан 18 центнер пухса илнĕ. Николай Саманов ертсе пыракан 3-мĕш бригадăра кашни гектартан 21 центнер тулă пухса илнĕ. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозра та вăрлăх участокĕсенчен кашни гектартан вăтам шутпа 18—20 центнер пухса илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчи колхозсенче те йышлă. Вăрлăх участокĕсенчи тырпула малта пыракан колхозсем типтерлĕ пухса, вăхăтра çапса пĕтерчĕç. Вăрлăхлăх тырра çийĕнчех тасатса, ятарласа уйăрнă кĕлетсене хунă. Вăл тырра куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ, вăхăтран вăхăта тĕрĕслеççĕ. Паянхи кун çинчен çеç мар, ыранхи çинчен те шухăшлакан колхоз руководителĕсен çакăн пек тумалла та.

Анчах та уйрăм колхозсенче вăрлăх фончĕ пирки тăрăшмаççĕ-ха. Ишлей районĕнчи Сыпайкасси ял Советĕнчи «Вускассы» колхозра вăрлăх участокĕнчен вырса пухнă тырра ытти тырăсемпе пĕрлех турттарса капана хывнă, çапнă чухне пĕтĕмпех пĕрлештерсе янă. Çак колхозăн председателĕ пулнă Волков юлташ вăрлăхлăх тырă çинчен шутласа та пăхман. Кун пек тĕслĕхсем Красноармейски, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи уйрăм колхозсенче те пулнă. Комсомольски районри «Большевик» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăхлăх участокран пухса илнĕ тырра ытти тырăсемпе пăтраштарса янă та колхозăн парăмĕсене парса татма расходланă. Куславкка районĕнчи «Первое мая» колхозра 11 центнер вăрлăхлăх сортлă тулла ытти çĕре салатса янă. Çакăн пек тĕслĕх «Коммунар» колхозра та пулнă. Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Григорьев юлташ ку колхозсем вăрлăхлăх тырра салатнине пĕлнĕ, анчах вĕсемпе килĕшнĕ.

Çаксем вĕсем хăшпĕр районсенчи çĕрĕç, совет тата парти органĕсен руководителĕсем вăрлăх хуçалăхне йĕркелес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеменнине çирĕплетсе параççĕ. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырра çапас ĕçе тăсса пыни тата вĕсене тасатса сортлас ĕçе чылай районсенче тытăнманни те çавăн çинченех калать. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Çак районсенчи колхозсем иртнĕ çулхи йывăрлăхсенчен кирлĕ пек вывод туман.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхозсемпе совхозсенче вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывиччен, вăрлăх участокĕнчен пухса илнĕ тырпула, вăрлăхлăх хăварнисĕр пуçне, мĕнле те пулин урăх çĕре ярса тăкаклама чарчĕç, вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула вырăнсăр салатнăшăн айăплă çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма хушрĕç.

Вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывнă хыççăн, колхозсемпе совхозсенче вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырă ытлашши юлать пулсан, çав ытлашши тырра колхозсемпе совхозсен, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене тултарнă çĕре памалла, ун хыççăн кăна вара çав тырра ытти çĕре яма юрать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1946 çул валли вăрлăх фончĕ хывасси çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕç. Вăл постановленире кашни район мĕн чухлĕ тĕштырăпа пăрçа йышши тырă хывмаллине кăтартнă. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен çак плана кашни колхозах пилĕк кун хушшинче çитермелле тата вăрлăхлăх тырăсене çапса тасатса кĕлете хывма кашни колхоза çирĕп сроксем памалла. Вăрлăх участокĕнчен пухса илнĕ тырă вăрлăхлăх çитмест пулсан, вăрлăх фондне лайăхрах пулнă тырă шучĕпе хывса çитермелле.

СССР Совнаркомĕн «Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене акса тăвас ĕçе лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленийĕ тăрăх, кашни колхозрах пĕтĕм вăрлăх фончĕ шутĕнчен 50 % чухлĕ çулран-çула куçса пыракан вăрлăхăн страхфончĕ пулмалла. Çак фонда та халех чи лайăх тырă уйăрмалла.

1946 çулта пирĕн республикăн пĕтĕм лаптăка сортлă тырăпа акса хăвармалла. Çакна шута илсе, ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен вăрлăх фончĕ хывмалли плана тунипе пĕрлех, сортсăр тырра сортлă вăрлăхсемпе улăштармалли план тумалла, ăна кашни колхоз патне çитермелле тата вăл мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăмалла. Вăрлăхлăх тырра тасатас тĕлĕшпе тырă тасатакан машинăсемпе туллин усă курас шутпа, тырă тасатакан обозсем валли ятарласа маршрут тумалла. Вăрлăхлăх тырра январĕн 1-мĕшĕччен тасатса пĕтермелле, çав вăхăт тĕлнех вăрлăхлăх тыррăн пахалăхне вăрлăх лабораторийĕсенче тĕрĕслеттермелле.

Вăрлăх фончĕ—колхозăн ылттăн фончĕ. Вăл тырра никам та тĕкĕнме пултараймасть, ăна кашни колхозрах куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла. Вăрлăх фондне çителĕклĕ таран хывар, килес çулхи тырă тухăçĕшĕн кĕрешĕве тухар!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. Т. Ржанов юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство Управленийĕн начальникĕ пулса ĕçлеме лартасси çинчен

Василий Тимофеевич Ржанов юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство управленийĕн начальникĕ туса хурас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1945 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕ.

СУЙЛАВ КАМПАНИНЕ ИРТТЕРМЕ КĂЛАРАКАН ЛИТЕРАТУРА

Государствăн политика литератури кăларакан издательстви суйлав кампанине иртерме кĕнекесем нумай пичетлесе кăларать.

Çак кунсенче И. В. Сталин юлташăн Пĕтĕм Союзри Советсен VIII-мĕш Чрезвычайнăй съездĕнче 1936 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче ССР Союзĕн Конституцийĕ çинчен тунă докладне пичетлесе кăларать. Сталин юлташăн 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Пысăк театрта Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕнче каланă сăмахне уйрăм кĕнеке туса кăларать. «Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Конституцийĕ (Тĕп законĕ)» ятлă кĕнекене нумай экземпляр пичетлесе кăларать.

«СССР Верховный Совечĕн ведомоçĕсен» редакцийĕ СССР Верховный Советне суйламалли Положение уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларать. (ТАСС).

ПАВЛОВО ХУЛИНЧИ МЕТАЛИСТСЕН ĔÇĔ

Горький облаçĕнчи Павлово хулинчи Киров ячĕпе тăракан промысла артелĕ мирлĕ вăхăтра кирлĕ япаласем туса кăларма пуçланă. Кунта халĕ çĕçĕсем, вилкăсем, çăрасем, тĕрлĕрен тимĕр япаласемпе инструментсем тăваççĕ.

IV-мĕш кварталта артель куллен кирлĕ таварсем 2 миллион тенкĕлĕх туса кăларать. (ТАСС).

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Малта пыракан колхоз

Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз (председателе И. Григорьев юлташ) хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçларĕ. Колхоз государствăна 10.000 пăт тырă парса, плана сентябрĕн 24-мĕшĕ тĕлнех тултарнă та планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 1000 пăт тырă панă. Çĕрулми тата пахчаçимĕç те государствăна парса татнă.

«Дружба» колхоз выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене парас тĕлĕшпе те плана ирттерсе тултарнă. 1945 çулта 70 центнер вырăнне 80 центнер аш-какай, 11.500 литр вырăнне 14.000 литр сĕт, 160 килограмм вырăнне 169 килограмм çăм панă. 11.000 çăмарта, 68 килограмм брынза тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем те парса татнă. Сÿс-кантăр тата ытти техникăллă культурăсене парас тĕлĕшпе те колхоз государство умĕнче парăмлă мар.

Колхозра килес çулхи тырпул тухăçлăхĕшĕн те кăçалах кĕрешме тытăннă. 300 гектар кĕрхи çĕртме туса, килес çул çуртырри акмалли çĕре пĕтĕмпех сухаласа пĕтернĕ.

«Дружба» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те кăтартуллă ĕçлет. Фермăсен заведующийĕ пулса кунта В. Тимофеев юлташ ĕçлет. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана: ĕне-выльăх енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 138 процент, сыснасем енĕпе 101 процент, лашасем енĕпе 101 процент тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх валли витесем çителĕклĕ, вĕсене юсаса хĕле хатĕрленĕ. Колхозри выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ. Утă-улăмсăр пуçне 700 лав ытла путек çапни, 150 центнер вĕлтĕрен, 100 центнера яхăн армути, 300 тонна силос хатĕрленĕ. Ферма çумĕнчи участокран 300 центнер çĕрулми, 100 центнер выльăх кăшманĕ, 300 центнер утăлăх вика пухса илнĕ. Çак выльăх апатне пĕтĕмпех фермăсен заведующийĕпе фуражир аллине акт тăрăх панă.

Колхоз ĕçĕнче палăрнă колхозниксене «Дружба» колхоз правленийĕ хаклă премисем—пăрусем, сурăхсем, çăматăсем, çăм тата ытти япаласем те панă.

Колхозра нумай çул хушши конюх пулса ĕçлекен 65 çулхи В. Т. Казанцев юлташа, тихасене лайăх пăхса çитĕнтернĕшĕн тата лашасене лайăх пăхнăшăн çăматă тата пĕр путек панă. Пăру пăхакан Екатерина Гавриловăна пĕр пăру тата çăматă панă. 3-мĕш бригадăри Мария Иванова пĕр гектартан вăтам шутпа 1800 пăт çĕрулми пухса илнĕ. Çакăншăн ăна пĕр мăшăр çăматă тата ĕçкунĕ çумне хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 72 пăт çĕрулми панă. 1-мĕш бригада кăçал пур ĕçре те мала тухнă. Бригадăна лайăх ертсе пынăшăн çак бригадăн бригадирне Александр Николаев юлташа («За трудовую доблесть» медаль илнĕскере) çăматă тата пĕр путек парса премиленĕ.

Колхоз вăйлăланса, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланса пырать. Халĕ кашни колхозник çуртнех электричество тата радио кĕртеççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

КОЛХОЗРИ ПАРИКМАХЕРСКИ

Куславкка районĕнчи Кунерти Киров ячĕпе тăракан колхозра парикмахерски уçнă. Парикмахер пулса вăрçă инвалиçĕ П. Иванов юлташ ĕçлет.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ТАТА ÇĔРУЛМИ КĂЛАРАС ĔÇСЕМ ОКТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă
Шăмăршă	87,0	100,0
Çĕрпÿ	81,6	90,0
Шупашкар	80,8	71,2
Элĕк	80,1	92,7
Октябрьски	79,8	67,6
Калинино	77,9	89,9
Комсомольски	76,6	84,3
Первомайски	76,0	100,0
Тăвай	75,1	62,1
Кувакино	75,1	29,2
Вăрнар	74,6	72,5
Куславкка	74,6	63,0
Ишлей	74,2	91,7
Вăрмар	73,8	83,8
Чурачăк	73,3	91,4
Красноармейски	72,9	100,0
Йĕпреç	72,3	62,1
Сĕнтĕр	71,6	66,8
Канаш	71,5	44,6
Шăхасан	69,9	84,5
Чкаловски	69,6	100,0
Муркаш	68,5	60,5
Елчĕк	68,1	100,0
Хĕрлĕ Чутай	67,4	92,1
Сĕнтĕрвăрри	67,1	63,4
Çĕмĕрле	65,9	57,6
Улатăр	65,2	1,5
Советски	62,6	77,9
Пăрачкав	62,5	44,1
Етĕрне	59,4	28,1

Плана 107 процент тултарнă

КАЛИНИНО, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС кĕрхи çĕртме планне октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 107 процент тултарчĕ. МТС-ри 4 бригада хăйсен планне ирттерсе тултарнă. Ефим Иванов ертсе пыракан бригада 133 процент, Алексей Трофимов ертсе пыракан бригада 117 процент, Егор Кириллов бригади 105 процент, 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ П. Яковлев) 103 процент тултарнă.

Тракторист Георгий Степанов 73 гектар сухаланă. Тракторист Евгений Федоров хăйĕн планне 110 процент тултарнă. Илья Федотовпа Филипп Яковлев трактористсем те хăйсен планне кашниех 115-шер процент тултарнă. Çĕртме тăвас ĕç малалла пырать.

А. СТЕПАНОВА.

Кунта ячĕшĕн кăна ĕçлеççĕ

ЕЛЧĔК. Шăмалакри «2-ая Пятилетка» колхоз тырпул пухса кĕртес енĕпе чăтма çук юлса пырать. Колхозăн пурĕ 756 гектар тырă пулнă, çак тырра уйăх çурă ытла вырнă. Вырнă тырра нумай тăккаланă, кашни тăваткал метра 60—70 пучах выртса юлнă. Тăккаланчăксене пухас тĕлĕшпе нимĕн те туман, кĕлтесене турттарса кĕртиччен хире хурсемпе ытти выльăхсем кăларса янă. Тырă вырса илнĕ вырăнсенче тăкăнса юлнă тырă халĕ акнинчен те вăйлăрах шăтса тухнă. Колхозра пурне те ячĕшĕн çеç тума пăхаççĕ. Тырă вырса кĕртнĕ чухне ĕç пахалăхне тĕрĕслеме кунта ятарласа 3 çынран пахалăх комиссийĕ тунă. Анчах çак комисси членĕсем «пахалăх комиссийĕнче ĕçленĕшĕн» ĕçкунĕ илнисĕр пуçне, урăх нимĕн те туман. Бригадирсем хирти ĕçе тĕрĕслесе йышăнман, колхоз председателĕ Муллин та вара бригадирсенчен ячĕшĕн кăна йышăннă, нихăçан та мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тата виçсе илмен.

Колхоз паянхи куна та 56 гектар тырра капана хывман. Авăна чăтма çук вăрахăн çапаççĕ. Колхоз председателĕ Муллин ку ĕçре те, яланхи пекех, васкамасть. Авăн çапма ирхине 8—9 сехетре тытăнаççĕ те каçхине 5—6 сехетрех ĕçрен кĕреççĕ. Кулленхи нормăна тултарассишĕн никам та тăрăшмасть та кам мĕнле ĕçленине те никам та тĕрĕслемест. Çавна пула «2-ая Пятилетка» колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствине те тултарса пыраймасть, тырă памалли графика яланах пăсать. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне колхоз государствăна тырă памалли плана 50 процента яхăн кăна тултарнă.

Колхозра вăйлă тырпулшăн кĕрешмеççĕ. План тăрăх колхозăн кăçал 330 гектар çĕртме тумалла пулнă, анчах та кунта вара пурĕ те 52 гектар кăна сухаланă.

Колхозра массăллă-политикăллă ĕçе те кирлĕ пек туса пымаççĕ. Агитаторсем производствăри ĕçе хутшăнмаççĕ, хăнасем пек пĕр çур сехетлĕхе хире тухаççĕ те хаçат вулакаласа парсанах кĕрсе каяççĕ. Вĕсем хăйсем колхоз ĕçне хутшăнман пирки колхозниксем вĕсене хисеплемеççĕ. А. Анисимовăпа К. Дмитриева агитаторсем вара колхозниксем хушшинче пачах пулмаççĕ.

Муллин юлташăн çаврăнăçусăрлăхĕ колхоз ĕçне юхăнтарать. Çавна пула колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене вăхăтра пурнăçласа пыраймасть. ВКП(б) райкомĕпе райисполкомĕ çакна кураççĕ. Муллина ответ тыттарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

М. ЕГОРОВ.

Пур ĕçе те вăхăтра тумалла

МУРКАШ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă парас тĕлĕшпе район 2-мĕш вырăна тухрĕ. Районăн çывăх кунсенчех государствăна тырă парса татма пур условисем те пур.

Анчах та паян тумалли чылай ĕçсем районра кая юлса пыраççĕ. Районри 77 колхозран 17 колхоз капан хывса, 5 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Нумай колхозсем пур ĕçе те пĕр вăхăтра туса пыма пĕлмеççĕ-ха.

«Труд» колхозăн çак вăхăт тĕлне капана хывман тĕштырă 100 гектара яхăн шутланать. Авăн çапас ĕç те чăтма çук начар пырать. Колхозăн 2 молотилка пур, анчах вĕсемпе туллин усă курмаççĕ. 28 гектар çĕрулмирен 6 гектар кăна кăларнă. Колхозра 57 ĕç лаши пур пулин те çĕртме тума тытăнман. Государствăна çĕрулми парса татман. Ĕçсем çакăн пек юлса пыраççĕ пулсан та, колхозра октябрĕн 3-мĕшпе 4-мĕш кунĕсенче пĕр колхозник та тырпул пухса кĕртес ĕçре ĕçлемен. Колхоз председателĕ Семенов колхозри ĕçе пĕр вăхăтра тума тăрăшмасть. Çак колхозра ВКП(б) райкомĕпе райисполкомĕн уполномоченнăйĕ пулса Никитина юлташ ĕçлет. Вăл та Семеновпа килĕшсе ларать, тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн ответлă пулнине туймасть.

«Комбайн», «Социализм», «Звезда», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те капан хывас тата авăн çапас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çак колхозсем тĕштырăсене çуррине хиртен те турттарса пĕтермен.

Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татмалли тата кĕрхи çĕртме туса пĕтермелли уйăхлăхăн çурри иртрĕ. Анчах та Панкли, Йÿçкасси ял Совечĕсенчи колхозсенче уйăхлăх çинчен колхозниксене ăнлантарса паман. «Пионер», «Первое мая», «Красный Октябрь», «Родина», Черняховский ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапас тата çĕрулми кăларас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ. Çак колхозсенче пурĕ те 40 процента çити кăна çĕрулми кăларнă. Районăн государствăна 1311 тонна çĕрулми памалла, паянхи куна вара пурĕ те 214 тонна кăна панă.

Çĕрулмипе пахчаçимĕçсене хума нумай колхозсенче подвалсемпе хранилищесем çителĕксĕр. Районра хăш колхозăн мĕн чухлĕ çĕрулми хывмалăх подвалсем пуррине никам та пĕлмест. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозăн кăларнă çĕрулмине хума пĕр подвал та çук, подвал хатĕрлес тĕлĕшпе халĕ те нимĕн те тумаççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Государствăна пĕр колхоз та çĕрулми парса татман

КӲКЕÇ. Районри 101 колхозран 50 колхоз государствăна тырă парса татнă. Малта пыракан «Крахмал», «Память Ленина», «Зерно», «Кукшум» тата ытти колхозсем те планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 4—5-шер тонна тырă пачĕç.

Анчах та государствăна тырă парас ĕç юлашки кунсенче палăрмаллах начарланчĕ. Октябрĕн 9-мĕшĕнче пĕтĕм районĕпе те 12 тонна кăна тырă панă. Каганович ячĕпе тăракан колхозăн тата 77 тонна, «Урожай» колхозăн 14 тонна, «Чăваш Коммуни» колхозăн 11 тонна тырă памалла. «Самолет», «Трудовик», «Шăнкас» колхозсем государствăна тырă памалли плана çурри ытларах кăна тултарнă.

Районра çĕрулмипе пахчаçимĕç пухса кĕртес тата государствăна парас ĕç уйрăмăнах çителĕксĕр пырать. Колхозсен пурĕ 1654 гектар çĕрулми, 300 гектар пахчаçимĕç пухса кĕртмелле. Паянхи куна çĕрулми кăларас тĕлĕшпе плана 71 процент, пахчаçимĕç пухса кĕртес тĕлĕшпе 50 процент кăна тултарнă. Районра пĕр колхоз та государствăна çĕрулми парса татман, пахчаçимĕç парасси те калама çук начар пырать. «Рыкша», «Смычка», «Шăнкас», «Кормилец», «Актив» тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсем çак кунсенче кăна çĕрулми кăларма тата пахчаçимĕç пухса кĕртме тытăнчĕç. Иртнĕ çул «Луга», «Урожай», Ильич ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулмипе пахчаçимĕçе вăхăтра пухса илеймесĕр юр айне ячĕç. Районри хăшпĕр колхозсем кăçал та çак хăрушлăх умĕнче тăраççĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи çĕртме тунă
Çĕрпÿ	79,6
Красноармейски	63,7
Вăрнар	61,6
Чурачăк	60,6
Октябрьски	60,4
Вăрмар	58,0
Куславкка	57,3
Шăхасан	55,6
Сĕнтĕрвăрри	55,2
Шупашкар	53,8
Сĕнтĕр	53,3
Ишлей	51,2
Етĕрне	49,3
Елчĕк	49,1
Калинино	46,5
Чкаловски	41,3
Элĕк	40,2
Комсомольски	40,2
Муркаш	36,3
Йĕпрес	35,3
Первомайски	34,0
Хĕрлĕ Чутай	31,0
Тăвай	28,7
Советски	28,2
Шăмăршă	28,2
Канаш	26,6
Улатăр	26,4
Çĕмĕрле	26,4
Пăрачкав	20,3
Кувакино	17,0

ВКП(б) ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ПЛЕНУМĔ

Кăçалхи октябрĕн 12-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум 1945 çулăн виççĕмĕш кварталĕнче партие илнин итогĕсем тата комсомол организацийĕсене парти енчен ертсе пырасси çинчен сÿтсе яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ Шаронова юлташ доклад туса пачĕ. Вăл çакна палăртрĕ: хулари парти организацийĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн ретне 2.233 çынна илнĕ, вĕсенчен ВКП(б) членне—976 çынна, ВКП(б) кандидатне—1257 çынна илнĕ. Кăçалхи III-мĕш кварталта партие 112 çынна илнĕ, вăл шутра ВКП(б) членне—71 çынна, ВКП(б) кандидатне—41 çынна илнĕ.

— Çакăн пирки асăрхаттармалла,— тет Шаронова юлташ:—кăçалхи виççĕмĕш кварталта партие пĕрремĕшпе иккĕмĕш кварталта илнисенчен сахалтарах илнĕ. 110 пуçламĕш парторганизацирен тата парти кандидачĕсен 5 группинчен партие илес тĕлĕшпе 45 парторганизаци кăна ĕçленĕ. Хăйсен речĕсене ÿстерес тĕлĕшпе Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри парторганизаци начар мар ĕçленĕ. Унта виççĕмĕш кварталта партие 24 çынна илнĕ. Çавăн пекех республикăри парти шкулĕнчи, Наркомземри, Кошелев юлташ директор пулса ĕçлекен заводри тата ытти çĕрти парторганизацисем те паллă ÿсĕм тунă. Анчах ку организацисем те хăйсен речĕсене ÿстермелли майсемпе çителĕклĕн усă курайман-ха.

Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе торф предприятийĕнчи, горисполкомри, Госбанкри, табак фабрикинчи тата ытти çĕрти парторганизацисем пачах та çителĕксĕр ĕçленĕ. Çав парторганизацисен секретарĕсем малта пыракан çынсене партие хутшăнтармалли тĕп майсенчен пĕри—массăсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе туса пыни, партире тăман актива хуçалăхпа политика кампанийĕсене пурнăçа кĕртме явăçтарни пулса тăни çинчен маннă. Партиллĕ-политикăллă ĕçе Шупашкарти Заготзерно пунктĕнче, кинофикаци управленийĕнче, Наркомпищепромра, пир-авăр фабрикинче япăх организациленĕ.

Хăшпĕр парторганизацисем партие илес ĕç çине çиелтен пăхнă тĕслĕхсем те пур.

Чылай парторганизацисем парти речĕсене ÿстермелли тĕп резерв комсомол пулса тăни çинчен маннă. Виççĕмĕш кварталта партие илнĕ юлташсенчен комсомолецсем 20 çын çеç шутланаççĕ. Орденлă заводри парторганизаци комсомолецсен йышĕнчен партие икĕ çынна çеç илнĕ. Кунти комсомол организацийĕ хулари чи пысăккисенчен пĕри пулса тăрать.

Хăшпĕр коммунистсем партие ÿстерес ĕçри хăйсен тивĕçĕ çинчен манса каяççĕ. Уйрăм парторганизацисенче парти ретне çĕнĕрен кĕрекен юлташсене рекомендацисем паракан коммунистсем питĕ сахал.

Шаронова юлташăн доклачĕ тăрăх прение Борох, Тютиков (Чăваш АССР Военкоматĕнчен), Соколова (Ялхуçалăх институтĕнчен), Кошевер (пир-авăр фабрикинчен) тата партин хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташсем тухса каларĕç.

Комсомол организацийĕсене парти енчен ертсе пырасси çинчен ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Ардаматский юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче çакна палăртрĕ: юлашки вăхăтра комсомолăн хулари организацийĕн йышĕ чылай улшăннă. Вăрçă вăхăтĕнче комсомола 4.028 çынна илнĕ. Комсомолăн ертсе пыракан активĕ те улшăннă. Çавăнпа та комсомолецсем тата союзра тăман çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне вăйлатмалла, комсомол ĕçне парти организацийĕсен куллен ертсе пымалла.

Анчах нумай парторганизацисем комсомол ĕçĕ çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне çителĕксĕр йĕркеленĕ, спорт ĕçĕпе культурăллă-массăллă ĕçе япăхтарса янă. Çамрăк рабочисем ĕç дисциплинине пăснă тĕслĕхсем пур. Комсомолăн хулари организацийĕ юлашки вăхăтра вăрахăн ÿссе пырать.

ВЛКСМ хула комитечĕн бюровĕ комсомолăн Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа çителĕксĕр кĕртсе пырать, хăйĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине сÿрĕк тĕрĕслесе тăрать, хăй тавра комсомол активне кирлĕ пек пĕтĕçтермен, комсомолецсемпе çамрăксене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе хулари интеллигенцие явăçтарман.

Ардаматский юлташăн доклачĕ тăрăх прение Полукаров, ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Агеева, Борох, Чăваш АССР çутĕç халăх комиссарĕ Макаров, Коган юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен пленумра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Шупашкар горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ.

Сÿтсе явнă ыйтусем тăрăх пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

ЯЛХУÇАЛĂХĔПЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ПРОДУКЧĔСЕМ ХАТĔРЛЕС ĔÇ ТАТА ЯЛ СОВЕЧĔСЕН ЗАДАЧИСЕМ

А. М. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Государствăна ялхуçалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси колхозсен Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçĕ пулса тăрать. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен патриотла тивĕçне тарăнăн ăнланса илсе, государство умĕнчи обязательствăсене тӳрĕ кăмăллăн пурнăçа кĕртсе пычĕç. Çак ĕçре Совет влаçĕн ялти органĕсем—ял Совечĕсем мухтава тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕç.

Пирĕн республикăри малта пыракан нумай ял Совет председателĕсем ялхуçалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçĕн ăста организаторĕсем пулса тăчĕç. Ял Совечĕсен вырăнĕ татах та çӳлерех ӳсрĕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе пурнăçа кĕртме колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилес тĕлĕшпе районсен руководителĕсем ял Совечĕсене ĕçлĕ пулăшу парса пынă, парса пыраççĕ те.

Вăрнар районĕнчи колхозсем, лайăх тырпула вăхăтра пухса кĕртсе, государствăна тырă срокчен парса татрĕç. Ку районри нумай ял Совечĕсем çак хĕрӳллĕ кунсенче колхозсене большевикла ертсе пычĕç. Акă, сăмахран, Хирпуç ял Советне илер. Çак ял Совечĕ (унăн председателĕ Николаев юлташ) колхозсенчи актива умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме лайăх организацилесе пырать. Ял Советĕнчи яланлăх комиссисем план тăрăх ĕçлеççĕ. Кунта ялхуçалăх комиссийĕн ĕçне уйрăмăн палăртса хăвармалла. Çав комиссин председателĕ Печников юлташ хăйĕн ĕçне колхоз производствинчи пысăк опытлă колхозниксене, дисциплинăпа йĕркелĕх тĕлĕшĕнчен пример кăтартакан колхозниксене явăçтарнă. Ял Совечĕ хăй исполкомĕн членĕсемпе ялти актив урлă колхозсемпе, бригадăсемпе, фермăсемпе тăтăшах çыхăну тытса тăрать. Пĕр-пĕр колхоз кăшт кая юлни палăрсан, ун çинчен çийĕнчех ял Советĕнче сӳтсе-яваççĕ те çав çитменлĕхе пĕтерме колхоза ĕçлĕ пулăшу параççĕ. Ял Совечĕ хăй территорине кĕрекен колхозсене çавăн пек тĕрĕс ертсе пынине пула, колхозсем государствăна тырă, аш-какай тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем вăхăтра парса татнă, халĕ вĕсем планран ирттерсе тырă параççĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе çавăн пекех тата Сĕрпӳ районĕнчи Лĕпсер, Октябрьски районри Туçа, Вăрнар районĕнчи Волонтер ял Совечĕсем те лайăх ертсе пыраççĕ.

Анчах республикăна пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул хатĕрлес ĕç питех те çителĕксĕр пулса пырать. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана республика 73,6 процент кăна тултарнă. Пĕлтĕр, çак вăхăт тĕлне эпир плана 83,5 процент тултарнăччĕ. Уйрăмах çак районсем япăх ĕçлеççĕ: государствăна тырă памалли плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне Кувакино районĕ 42,4 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ—58,3 процент, Çĕмĕрле районĕ—58,2 процент, Тăвай районĕ—57,8 процент, Улатăр районĕ—61,5 процент, Шăмăршă районĕ—56,6 процент кăна тултарнă.

Асăннă районсен руководителĕсем хăшпĕр колхоз председателĕсен государствăна хирĕç шухăш-кăмăлĕсемпе татăклăн кĕрешмеççĕ, колхоз активне, ял Совечĕсене партипе правительствăн постановленине пурнăçа кĕртме мобилизацилемеççĕ.

Пирĕн республика йывăр вăрçă вăхăтĕнче тырă хатĕрлемелли плана çулсеренех срокчен тултарса пынă. Халĕ, мирлĕ строительство тапхăрне кĕнĕ пĕррремĕш çулта, вăрçăра сиен курнă халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратас, хамăр çĕршывăн çарпа экономика хăватне малалла тĕреклетсе пырас аслă задачăсем тăнă чухне, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре çавăн пек кая юлнине тӳсме çук.

Кая юлнă районсен руководителĕсем хăйсен шалти ресурсĕсене çителĕксĕр мобилизацилеççĕ, ял Совечĕсемпе колхозсен ĕçне çирĕп ертсе пымаççĕ. Унтан та ытларах, хăйсем кая юлнине пĕтерес вырăнне, вĕсем кăçалхи çанталăк йĕпе-сапаллă тăни çинчен тата районăн уйрăм йывăрлăхсем пурри çинчен калаçса лараççĕ. Ку вăл пĕрре те тĕрĕс мар. Сăмахран, Улатăр районĕн ялхуçалăх ĕçĕсене ытти районсемпе пĕр танах туса пыма пур майсем те çителĕклĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕç пынă вăхăтра района хулари ĕççыннисем те сахал мар пулăшу панă. Анчах район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕр тыррисемпе çуртыррисене те вырса пĕтермен, авăна 51,8 процент чухлĕ кăна çапнă. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 61,5 процент кăна тултарнă. Кунта хатĕрлев пункчĕ çывăхра вырнаçса тăрать, нумай колхозсем тырра шыв транспорчĕпе турттарса леçсе пама пултараççĕ. Çавăн пекех çĕрулми кăларса государствăна парас ĕç те районра вăрахăн пырать.

Мĕншĕн-ха Улатăр, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Çемĕрле районĕсем пур тĕрлĕ ялхуçалăх ĕçĕсенче те çавăн пек кая юлса пыраççĕ?

Асăннă районсен руководителĕсем государство умĕнчи ответлăха туймаççĕ, ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçе туса пымаççĕ. Çав районсенче советсен организацилле-массăллă ĕçне питĕ япăх йĕркеленĕ, тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен колхозниксене вăхăтра ăнлантарса памаççĕ, колхозниксен ĕç дисциплини япăхса кайнă, çакăнпа пĕрлех тата районри партипе совет тата çĕрĕç органĕсем колхозсене ĕçре кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Государствăна тырă парас ĕç авăн çапас ĕçĕн хăвартлăхĕнчен нумай килет. Анчах республикăри колхозсем авăна вăрахăн çапаççĕ-ха. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Çемĕрле, Етĕрне, Елчĕк, Чкаловски, Советски, Кувакино, Пăрачкав районĕсенчи колхозсем авăна пурĕ те 57,1 — 63,1 процент чухлĕ кăна çапнă.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем авăн çапнă çĕрте комбайнсемпе тата молотилкăсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ. Сиява, Сĕнтĕр, Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Шăхасан МТС-ĕсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Авăн çапмалли плана вĕсем 20 процента яхăн кăна тултарнă. Çав МТС-сен директорĕсем молотилкăсене техника енчен пăхса тăрассине йĕркелемен, бригадăсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетсе пыма тăрăшмаççĕ.

Авăна кунĕн-çĕрĕн çапмалла тăвас пулать. Мĕнпур молотилкăсемпе туллин усă курмалла. Тырă парас ĕçĕн хăвартлăхне ӳстерес тата çакă питех те паха ĕçе октябрь уйăхĕнче пĕр пăркаланмасăр туса çитерес тĕлĕшпе чи çирĕп мерăсем йышăнас пулать. Çакна пурнăçа кĕртме пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ вăрçă çĕнтерӳллĕн пĕтнипе хавасланнă. Колхозсене çартан вăй-питти çынсем нумай таврăннă. Çакă вăл тырă хатĕрлемелли плана срокчен тултарма пысăк пулăшу парать.

МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă парас ĕç пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи обязательствăсем тăрăх тырă памалли плана 80,2 процент тултарнă пулсан, натуроплата планне вара 60 процент кăна тултарнă.

Единоличник хуçалăхĕсем государствăна тырă тӳсме çук вăрахăн параççĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне ку енĕпе плана пурĕ те 17 процент кăна тултарнă. Улатăр, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Октябрьски, Советски, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчи единоличник хуçалăхĕсем паянхи куна çитсе те государствăна тырă пама тытăнман-ха. Ку енĕпе ĕçе вăйлатмалла. Единоличниксен пур хуçалăхĕсене те государствăна тырă вăхăтра парса таттармалла. Çак ĕçрен пăрăнма пăхакан хуçалăхсенчен тырра законпа шыраса илмелле. Единоличник хуçалăхĕсем хăйсен обязательствисене мĕнле татса пынине ял Совет председателĕсем çирĕп сăнаса тăма тивĕçлĕ.

Кая юлнă районсемпе колхозсен руководителĕсем, «тырă чĕрĕ» тесе, государствăна тырă памасăр тăраççĕ. Ку пачах та тĕрĕс мар. Çавăн пек шухăш-кăмăл вăл тырă хатĕрлес ĕçе пăсакансене тата саботажниксене кăна пулăшать.

Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ колхозсенче тырă типĕтме сушилкăсем тата авăнсем тума кирли çинчен районсемпе вырăнти советсен тата колхозсен руководителĕсене вăхăтра асăрхаттарнă. Анчах Йĕпреç, Кувакино, Тăвай, Улатăр, Çĕмĕрле, Октябрьски районсен руководителĕсем çав кăтартăва пурнăçа кĕртмерĕç. Çавна пула асăннă районсенчи хăшпĕр колхозсен руководителĕсем тырă типĕтес тĕлĕшпе йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕç, кунсăр пуçне тата çав сăлтавпа уйрăм колхоз руководителĕсем хăйсен государствăна хирĕçле шухăш-кăмăлĕсене витме пăхаççĕ.

Советсемпе колхозсен руководителĕсем хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене шута илме, колхозниксемпе колхозницăсене государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах тултарас çĕре мобилизацилеме тивĕçлĕ.

Хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарас ĕçе хăвăртлатас тесен, колхозсенчи транспорт бригадисене пĕр тикĕс ĕçлеттермелле. Вырăнти советсен председателĕсем колхозсене туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курас ĕçре пулăшмалла. Пур ĕçе те — тырă турттарас, кĕрхи çĕртме тăвас, авăн çапас ĕçсене—пĕр вăхăтрах туса пымалла. Çавăнпа та ĕçре ĕне-выльăхсемпе анлăнрах усă курас пулать, лашасене кирлĕ-кирлĕ мар çĕре турткалама пăрахас пулать.

Республикăри хăшпĕр ял Совечĕсемпе колхоз руководителĕсем çавранăçусăр ĕçленине пула, колхозсенчи туртăм вăйĕпе тĕрĕс мар усă кураççĕ. Сĕрпӳ районĕнчи «Боец», «Малалла» колхозсем хатĕрлев пунктне темиçе хутчен те чĕрĕ тырă турттара-турттара кайнă. Çавăн пирки «Боец» колхозăнне сентябрь уйăхĕнче 28 лава хатĕрлев пунктĕнчен каялла таврăннă. Анчах Нĕрĕш ял Совет исполкомĕн председателĕ Прокопьев юлташ çав йăнăша хăвăрт тӳрлетес вырăнне, ку ĕçрен пачах аяккалла пăрăнса тăнă. Ял Совечĕ япăх ертсе пынă пирки «Боец» тата «Малалла» колхозсем государствăна тырă парас ĕçре питĕ кая юлнă. Кун пек фактсем Октябрьски, Муркаш районĕсенче тата ыттисенче те пур.

Республикăра çĕрулми кăларса государствăна парас ĕç тӳсме çук япăх пырать. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Улатăр районĕнче çĕрулмине 451 гектартан—5 гектар, Кувакино районĕнче 246 гектартан—21 гектар, Пăрачкав районĕнче 489 гектартан—25 гектар кăна кăларнă. Çĕрулми памалли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикипе пурĕ те 17 процент çеç тултарнă. Çĕрулми вăл—иккĕмĕш çăкăр. Çак çимĕçе хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Анчах Улатăр, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Пăрачкав районĕсемпе ыттисем государствăна çĕрулми парас ĕçе питĕ япăх йĕркеленĕ. Çĕр шăнта пуçларĕ. Çĕрулмине халех кăларса пĕтерсе государствăна парса татмалла.

Пахчаçимĕç хатĕрлес ĕçĕн хăвăртлăхне те ӳстермелле. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пахчаçимĕç хатĕрлемелли плана республика пурĕ те 17,2 процент çеç тултарнă.

Районсенче техникăллă культурăсем хатĕрлес ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Чылай çĕрте ку таранччен те йĕтĕн татса пĕтермен. Йĕтĕн-кантăра çерем çине сарса тата шыва хутса пултарас ĕç татах та япăхрах пырать.

Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парас тĕлĕшпе республика кая юлса пынине пĕтерес тата хамăр илнĕ обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртес шутпа, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх ирттерме йышăнчĕ. Вырăнти советсемпе колхоз руководителĕсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн хальхи вăхăтра парти Обкомĕн çав решенине пурнăçа кĕртессинчен пахарах задача урăх çук. Чăваш республики Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăмра тăрать, çав парăма пирĕн хăвăртрах татмалла.

Государство влаçĕн вырăнти органĕсен руководителĕсем, пуçласа тăракан ял Совет председателĕсем авăн çапас, тырă типĕтес тата хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарас ĕçсене вăйлатма колхозсене ĕçлĕ те татăклă пулăшу пама тивĕçлĕ. Çав задачăна ăнăçлăн татса парас тесе, тырă хатĕрлес ĕçе хирĕç тăракансемпе, государство интересĕсем çине сӳрĕк пăхакансемпе çирĕппĕн кĕрешмелле, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтерес, государствăна тырă памалли плана хăвăртрах тултарас ĕçе мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле.

Республикăра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç япăх пырать. Государство умĕнчи обязательствăсене республика выльăх-чĕрлĕхĕн пĕр продукчĕ енĕпе те тултарман-ха. Государствăна аш-какай памалли плана республика октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 56,1 процент, сĕт памалли плана—59 процент, брынза памалли плана—8,1 процент кăна тултарнă. Государство валли сĕт илмелли планă 9,5 процент çеç пурнăçланă. Республикăри 30 районтан пĕр Красноармейски район кăна аш-какай памалли плана тултарнă.

Сĕт хатĕрлес ĕç япăх пыни уйрăмах шиклентерет, мĕншĕн тесен ĕнесем сĕт нумай парас вăхăт иртсе кайрĕ. Районсен руководителĕсем çак ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ, ял Совечĕсемпе колхозсенчен, районри хатĕрлев органĕсенчен ку тĕлĕшпе ыйтма тивĕçлине ыйтмаççĕ. Сăмахран, Сĕрпӳ районĕнчи Нĕрĕш тата Шĕнер ял Совечĕсен, Октябрьски районри Туçа ял Совечĕн колхозсем мĕн чухлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕ пама тивĕçлине кăтартакан сведенисем те çук.

Районсемпе ял Совечĕсен, колхозсен руководителĕсем сĕт-çу, аш-какай тата ытти тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхма, ку тĕлĕшпе плана пĕр пăркаланмасăрах пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ.

Ялхуçалăх çулĕ пĕтсе пырать. Ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те тĕплĕн туса пĕтермелли татăклă кунсем çитрĕç. Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес, государство умĕнчи пур обязательствăсене те чыслăн тултарас тесен, халĕ пирĕн пур вăйсемпе майсене те мобилизацилемелле.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса

ОКТЯБРЬСКОЕ. Сĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанс работникĕсемпе Госстрах работникĕсем финанс планне тултарассишĕн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине районри финанс работникĕсем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Кунта финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу иртнĕ кварталта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Нарат Чакки, Кив Тутайкасси тата Çатракасси ял Совечĕсем лайăх ĕçленине палăртрĕ. Вĕсем III-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана 160—190 процента яхăн тултарнă. Çав вăхăтрах Ĕмпĕрт Туçа тата Аксарин ял Совечĕсем III-мĕш квартал планне пурĕ те 52—61 процент çеç тултарнă.

Канашлура пулнă финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсем пурте пĕр кăмăллă пулса Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, укçа-тенкĕ пухмалли IV-мĕш квартал планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 65 процентран кая мар тултарма, ку тĕлĕшпе халăх хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса яма обязательство илчĕç.

И. ЕФРЕМОВ,
Районри налог инспекторĕ.

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКА ЖУРНАЛИСЧĔ АМЕРИКАНЕЦСЕН ГЕРМАНИРИ ОККУПАЦИЛЛĔ ВЛАÇĔСЕН ПОЛИТИКИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Даниэль американецсен Германири оккупацилле влаçĕсен политикине хытă питлет. Вăл çапла çырать: «Американецсен оккупацилле органĕсенче—мĕн çултен пуçласа аяла çитиех—пур çĕрте те нимĕçсем хуçаланаççĕ». Даниэль каланă тăрăх, Америка оккупациленĕ зонăра Потсдамра палăртнă политикăна пур майсемпе те пăсма тăрăшни палăрать.

Даниэль малалла çапла калать: «Потсдамра йышăннă политикăна пурнăçа кĕртме хушнă çынсене Германин политикипе экономикинче нацизма пĕтерсе тăкни Хĕвеланăç Европăна революциленме сарлака майсем уçса парассине хăратса тăрать». Паттон гитлеровецсене ертсе пыракан постсенчен кăларма килĕшменнин сăлтавĕ ĕнтĕ шăпах çакă пулнă. Даниэль çапла калать: «Паттон вăл Германие хирĕç кĕрешесен гитлерла çар машинине аркатса тăкнипе çеç пĕтменнине ăнланса илмен Америка офицерĕсен представителĕ пулса тăрать».

Даниэль çапла асăрхаттарать: «Потсдамри килĕшĕве хирĕçлесе Германи промышленноçне çăлса хăварма тăрăшнинчен пирĕн хытă сыхланмалла».

ГЕРМАНИЕ ВĂРÇĂРА ПУЛĂШСА ПЫНĂ ШУЛТĂРА ПРОМЫШЛЕННИКСЕМПЕ ÇĔР ХУÇИСЕН СПИСОКĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Америка правительстви Германири шултăра промышленниксемпе çĕр хуçисен списокне пичетлесе кăларнă. Вĕсене нацистсем тунă преступленисене хутшăннăшăн айăплаççĕ. Вĕсене айăпламалли сведенисене Килгор сенатор председатель пулнипе ĕçленĕ комисси пухнă. Списока çаксем кĕнĕ: Рудольф фон Альвенслебен граф, Альфред Крупп фон Болен унд Гальбах, Густав Крупп фон Болен унд Гальбах, Альфред Гугенберг доктор, Карл Линдеман, Курт Шмидт, Герман Шмидт доктор, Георг Шницлер, Курт фон Шредер барон, Герман фон Сименс, Гуго Стиннес, Вильгельм Тенглер, Фриц Тиссен, Альберт Фёглер, Курт Вейгельт доктор, фон Вильмовский барон тата ыттисем те.

ПОРТУГАЛИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Лиссабонран пĕлтернĕ тăрăх, митинга пухăннă халăх нации пухăвне суйлассине улттă уйăхлăха хăварма ыйтнă. Нации пухăвне Португалире ноябрĕн 18-мĕшĕнче суйлама палăртнă. Митингра Португали демократĕсем темиçе çĕр çын пулнă. Çавăн пекех тата митинга пухăннисем сăмахпа пичет ирĕклĕхне пама, уйрăм çынсен прависене хӳтĕлеме, политикăллă партисене тума, çĕнĕ хаçатсем кăларма ирĕк пама ыйтнă. Митингра студентсем, адвокатсем тата интеллигентсен ытти представителĕсем те пулнă. Вĕсене юстици министрĕ пулнă Франсиско Барбоза Магальяэнс профессор тата Альфонсо Коста ертсе пынă.

Адвокатсен ушкăнĕн руководителĕ Лима Альвес çапла каланă: «Оппозиционерсен политикăллă çак митингĕ Португалире юлашки çирĕм çул хушшинче пулса иртнĕ малтанхи митинг пулса тăрать. Ăна демократиллĕ çĕршывсем çĕнтернĕ хыççăн тин тума май килчĕ».

Нью-Йоркра пурăнакан португалецсем çапла шутлаççĕ: Салазар суйлав вăхăтне кăтарса пани Португалире вăрттăн юхăм вăйлине тата Салазара хирĕç çарпа флотра оппозици вăйланса пынине кăтартса парать.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Монтевидеоран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăри çарпа тинĕс-çар флочĕн представителĕсем Кампо де Майоран Эдельмиро Фаррель президент патне ультиматум янă. Çав ультиматумра вĕсем влаçа Верховнăй суд аллине пама ыйтнă. Агентство çав хыпар тĕрĕссине тĕрĕс маррине ĕнентерсе каламасть-ха. Пĕлтерӳре кăтартнă тăрăх, çав ультиматума çарти кĕçĕн офицерсем питĕ ырлаççĕ.

Аргентинăн министрĕ пуличчен Кампо де Майори тинĕс базин командирĕ пулнă Авалос генерал Кампо де Майона пынă. Кунта вăл министрсен кабинечĕн ларăвне халех ирттерме сăмах панă. Çав ларура 90 кун хушшинче суйлавсем туса ирттерес ыйтăва, университетсемпе хаçатсене хупни çинчен кăларнă декрета пăрахăçа кăларас ыйтăва, çавăн пекех тата Аргентинăри вăрçă вăхăтĕнчи положенине пăрахăçа кăларас ыйтăва сӳтсе явмалла.

Пĕлтерӳре каланă тăрăх, президент ультиматумпа килĕшме шутламасть.

Пĕлтерӳре тата çапла каланă: Аргентинăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Жуан Кук доктор. тепĕр икĕ министр тата Буэнос-Айресри полици начальникĕн ĕçĕсене туса пыракан Миттельбах подполковник хăйсен вырăнĕсенчен тухнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Буэнос-Айресра Аргентина кабинечĕ вырăнтан тухни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

ЯПОНИ ÇАРĔН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБНЕ ТАТА ТИНĔС-ÇАР ВĂЙĔСЕН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБНЕ ПĔТЕРСЕ ЛАРТНИ

ТОКИО, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Токиори радио пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 15-мĕшĕнче Японин типçĕр çинчи çарĕн генеральнăй штабне тата тинĕс-çар вăйĕсен генеральнăй штабне салатса яраççĕ. Çарăн 1-мĕшпе 2-мĕш тĕп штабĕсене «çара салатса ямалли штабсем» тесе ят параççĕ, вĕсем вара типçĕр çинчи çарсене киле салатса ярас тĕлĕшпе çеç ĕçлеççĕ. Ĕнер Японин мĕнпур тинĕс-çар вăйĕсен генеральнăй штабне тата пĕрлешнĕ флочĕн штабне салатса янă. Çывăх вăхăтрах Японири тинĕс-çар штабĕсене пурне те салатса яраççĕ. Ют çĕршывсенчи тинĕс-çар штабĕсене тинĕс-çар вăйĕсене салатса ярас тĕлĕшпе ĕçлеме хăвараççĕ.

ИТАЛИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

РИМ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Италири министрсен совечĕн председателĕ Парри октябрĕн 7-мĕшĕнче пресс-конференци туса ирттернĕ. Унта Итали журналисчĕсем пулнă. Пресс-конференцире Парри Италин тĕнчери лару-тăрăвĕ çинчен каланă май, çакна асăрхаттарнă: «Перемири условийĕсем йывăрланнăçемĕн йывăрланса пынине правительствăпа çĕршыв ытларах та ытларах туйса пыраççĕ. Пирĕн Пĕрлешнĕ нацисенчен хамăра валли вăрçă, экономика тата юридически статут туса пама ыйтма тивет: вăрçă статучĕ перемири условийĕсенчен тухса тăрать, экономика статучĕ вара пире ют çĕршывсемпе, пуринчен ытларах Америкăпа çыхăну тытассине йĕркелеме кирлĕ, юридически статут пире Пĕрлешнĕ нацисен шутне кĕрсе çĕршывăн шалти ĕçĕсене те тата тулашри ĕçĕсене те хамăра кирлĕ пек туса пыма май памалла».

Çурçĕрти провинцисене Итали администрацийĕ аллине мĕншĕн паманни çинчен ыйтнине ответленĕ май, Парри çапла каланă: пĕрлешнĕ штабсен начальникĕсем Вашингтонра ку ĕç пирки йывăрлăхсем умне тухса тăчĕç пулмалла, мĕншĕн тесен ăна татса парасси пĕтĕмпех вĕсенчен килет. Парри уйрăмах çакна палăртса хăварнă: союзниксем Италие пулăшу панă чухне Итали хăйĕн шалти политикинче мĕн тери пĕрлĕхлĕ пулнине çирĕп шута илĕç.

Государство переворочĕ çинчен сӳрекен сăмах пирки Парри çапла каланă: правительство ун пек хăрушлăха сирсе яма пултарать, анчах та çав сăмахсенчен чылайăшĕ суя сăмахсем пулса тăраççĕ.

Çавăн пекех тата Парри çĕршыва хăвăртрах тасатса çитересси çинчен каланă. Çĕршыва фашизм юлашкийĕсенчен тасатса çитерес тесе, çĕнĕ мерăсем йышăнĕç, вĕсене халĕ сӳтсе яваççĕ, тенĕ Парри.

Кăçал тырпул, ытти çулсенчипе танлаштарсан, 50—60 процент чухлĕ çеç пулчĕ. Çакă ĕнтĕ çĕршыври лару-тăрăва чылай йывăрлатать, тесе каланă Парри.

ГРЕЦИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Грецин телеграф агентстви каланă тăрăх çапла пĕлтерет: регент коалицилле правительство тума либералсен партийĕн лидерне Софулиса хушнă. Регент çапла услови лартнă: çав правительствăра монархистсен партийĕн представителĕсем те пулмалла, тенĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Афинăран илнĕ хыпара пĕлтерет. Греци регенчĕ Дамаскинос архиепископ Вулгарис адмирала çĕнĕ кабинет тума хушнă, мĕншĕн тесен либералсен лидерĕ Софулис правительство тума пултарайман.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔСĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ÇĔНĔ КОМАНДУЮЩИЙĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, У. Д. Морган генерал-лейтенанта союзниксен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ туса хунă. Çак вырăнта ĕçленĕ Гарольд Александер фельдмаршала Канада генерал-губернаторĕ туса хунă. Унччен Морган генерал Англин кантăр пайĕнчи çар округĕн командующийĕн ĕçĕсене туса пынă.

Профсоюз членĕсем хĕле хатĕрленес ĕçре

ВĂРНАР. Çак кунсенче вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕ пуçарнипе леспромхозăн вăрман пункчĕсенче профсоюз членĕсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Вĕсем унта хĕле хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-яврĕç.

Пухусем çакна палăртса хăварчĕç: леспромхозăн вăрман пункчĕсенче пурăнмалли çуртйĕрсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Леспромхозăн рабочисемпе служащисем пурăнакан çуртсенче 30 кăмака ытла пăсса юсамалла, нумай чӳречесен кантăкĕсене лартмалла. 2 мунчана юсаса ĕçе ямалла, сăлсене тасатмалла. Ку таранччен кунта çак ĕçсене тума тытăнманпа пĕрех.

Профсоюз членĕсен пухăвĕсем пурăнмалли çуртйĕрсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем тума палăртса хăварчĕç. Тĕрлĕ вак-тĕвек юсав ĕçĕсене профсоюз членĕсем хăйсемех тума пулчĕç. Леспромхозри кăмакасене тата пурăнмалли çуртйĕрсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерме йышăнчĕç.

Халĕ çак пухусем хыççăн хĕле хатĕрленес ĕç тĕпренех лайăхланчĕ. Вак-тĕвек юсав ĕçĕсене, картишсене тасатассине тата вутă айккисене купаласине рабочисемпе служащисем хăйсемех тума тытăнчĕç. Ку ĕçсене тума леспромхоз транспорт уйăрса панă.

Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Боярский инженерăн семьи лайăх ĕçлет. Вĕсем пӳрт çурта юсамалли вак-тĕвек ĕçсене хăйсемех туса çитернĕ, картишне тислĕкрен тата ытти тасамарлăхсенчен тасатнă.

Леспромхоз директорĕ кăмака тăвакан 6 мастер тупса, кăмакасене пăсса юсаттарма тытăннă. Çавăн пекех пурăнмалли çуртйĕрсене те юсама пуçланă. Кунсăр пуçне, леспромхозри рабочисемпе служащисем тата çар çыннисен семйисем валли вутă турттараççĕ.

Хĕле хатĕрленес ĕçсене ертсе пыма леспромхозра тата вăрман пункчĕсенче 3 çынран комиссисем тунă. Вĕсем пурăнмалли пĕтĕм çуртйĕрсене пăхса тухса, мĕнле ĕçсем тумаллине тата вĕсене хăш вăхăтра тумаллине кăтартса параççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

Кăçал августăн 11-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Хуçасăр килкартине вĕлтрен пусать» ятлă фельетон пичетленсе тухрĕ. Вăл фельетонра Шупашкар хула Совет исполкомĕ хула урамĕсемпе кĕперĕсене тата çулсене юсаса йĕркене кĕртес тĕлĕшпе начар ĕçлени çинчен çырнăччĕ.

Хула Совет исполкомĕ, çав фельетона хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса, фельетонри фактсем пурте тĕрĕс пулнине палăртнă.

Хула Совет исполкомĕ хула урамĕсене, парксемпе садсене пăхса тăрас ĕçе график тăрăх пурнăçласа пыма çирĕп решени йышăнса хăварнă. Çавăн пекех хула тĕлĕнчи Атăл сыранне йĕркене кĕртме йышăннă.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Александр Дмитриевич Калган юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусствă управленийĕн начальникĕнчен кăларнă.

ТӲРЛЕТНИ

«Чăваш Коммунин» октябрĕн 13-мĕшĕнче пичетленĕ «СССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин» 21-мĕш статьине çапла вуламалла:

Суйлавçăсен списокĕнчи тĕрĕсмарлăх пурри çинчен (списока кĕртменни, спискоран кăларни, хушамата, ята, ашшĕ ятне пăсса çырни, суйлав прависĕр хăварнă çынсене списока тĕрĕс мар кĕртни çинчен) çырнă заявление списока çырса пĕлтернĕ ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомне памалла. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомĕ суйлавçăсен спискокĕнчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă кашни заявление виçĕ кун хушшинче пăхса тухма тивĕç.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чăваш АССР Наркомторгĕн вĕренӳ комбиначĕ çак группăсене вĕренме илет: 2-мĕш категорири поварсен группине (унта 18 уйăх вĕренмелле), 3-мĕш категорири поварсен группине (унта 9 уйăх вĕренмелле), промтоварсем сутакансен группине (унта 12 уйăх вĕренмелле), апат-çимĕç таварĕсем сутакансен группине (унта 11 уйăх вĕренмелле). Çав группăсенче пуринче те учрежденире ĕçлеме пăрахса вĕренмелле.

Шкула 6 çултан кая мар вĕреннисене, 14 çултан çамрăк маррисене илеççĕ. Заявленисене октябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа йышăнаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 3, Наркомторг, III-й этаж, ком. № 29.

1—1.

СССР Наркомрезинопромĕн Главрасткаучукăн Чăваш конторине республикăра каучук лартса ӳстерекен районсенче ĕçлеме агрономсем кирлĕ. Ĕç укçи 600 тенкĕрен пуçласа 800 тенке çитиччен тӳлеççĕ. Хăйне уйрăм ĕç тумтирĕ тата промтоварсем параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 95. Тел. 5—29.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00553 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л Тираж 16.000 экз.